Ĕç сыхлавĕн ыйтăвĕсемпе

# Çынсем хăрушлăхсăр ĕçлеме пултарччăр

Ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавне лайăхлатмалли 2006 – 2008 çулсенчи программăна ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕн координаци канашĕ 2006 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. Ăна пур предприятисемпе организацисене çитернĕ, вырăнсенче ку енĕпе туса ирттермелли ĕçсене пăхса хунă.

Программăпа çак ĕçсене тивĕçтерме пăхнă:

– производствăра суранланассипе професси чирĕсемпе чирлессине чакарасси;

– ĕçре çынсен пурнăçĕпе сывлăхне сыхласа хăварасси;

– çынсене профессире инкек-синкекрен социаллă хӳтлĕх парасси;

– ĕç сыхлавĕн нормативпа право тата методика базин шайне ӳстересси;

– ĕç паракансене ĕç хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтернĕшĕн экономика тĕлĕшĕнчен хавхалантарасси;

– ĕç сыхлавĕ тĕлĕшпе информаципе тивĕçтерсе тăрасси.

Ĕç сыхлавĕпе çыхăннă ыйтусене ĕç сыхлавĕн координаци канашĕн ларăвĕсенче пăхса тухатпăр. Уйрăм ыйтусенчен хăрушлăхсăр ĕç условийĕсем туса парассин тата производствăра суранланассине асăрхаттарассин, професси чирĕсемпе чирлессин шайне чакарассин, районти ĕç условийĕсемпе ĕç сыхлавĕн 2006 – 2008 çулсенчи программине мĕнле пурнăçланин, районти предприятисен ĕç сыхлавĕ енĕпе смотр-конкурсĕн итогĕсене тата ытти ыйтусене асăнса хăвармалла.

Медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухассине те пысăка хуратпăр. Çакă уйрăмах наркăмăшлă имçамсемпе ĕçлекенсене кирлĕ. Кунпа пĕрлех предприятисемпе организацисенчи пушар хăрушсăрлăхĕ те кайри вырăнта мар.

Ĕç сыхлавĕ енĕпе мероприятисем ирттерессипе вырăнсенче методика рекомендацийĕсем пур. Организацисенче ĕç сыхлавĕн нормативпа право, техника документацийĕсен акчĕсемпе кирлĕ ытти документсем пур, анчах ку енĕпе çитменлĕхсем те сахал мар.

Хальхи вăхăтра предприятисемпе организацисенче хăш-пĕр чухне сывлăш тасалăхĕ кирлĕ шайра мар, унта тусан та, сиенлĕ производство газĕсем те пур. Çак çитменлĕхсене пĕтересси пирки паян шухăшламалла.

Ĕç сыхлавĕ енĕпе пĕрлехи тĕрĕслевсем ирттернин усси пысăк. Çавна май тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ предприятисемпе организацисенче ĕç сыхлавĕн пĕрлехи комиссийĕсене йĕркеленĕ. Юлашки вăхăтра кăна 39 çын хушма вĕрентӳ ĕçне хутшăннă.

Ĕç условийĕсем енĕпе ĕç вырăнĕсене аттестацилессине йĕркелетпĕр. Ку ĕçсене хальлĕхе районти тĕп больницăра, Муркаш райповĕнче пуçăннă.

Çавна та асăнса хăвармасăр май çук. Промышленность тата ял хуçалăх предприятийĕсенчен нумайăшĕнче хальхи вăхăтра санитарипе эпидемиологи тĕлĕшĕнчи ларутăрăва лайăхлатма кирлĕ таран укçа-тенкĕ уйăрмаççĕ. Çакă та ыйтусен кăткăслăхне ӳстерет. Усă куракан оборудованисен 50 проценчĕ кивĕ шутланать.

Ĕç условийĕсене лайăхлатас ыйтусене кун йĕркинчен кăлармалла мар. Ку енĕпе туса ирттермелли ĕçсене 2006 – 2008 çулсем валли хăш-пĕр организацисенче халĕ те туса хатĕрлемен-ха.

Районта организацисенчи ĕç сыхлавĕн шайĕн банк даннăйĕсене туса хатĕрлес ĕç пырать. Кунта роспотребнадзорăн, госпожнадзорăн, çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн, тĕрĕслевĕн федераллă тата республикăри органĕсен кăтартăвĕсене шута илеççĕ.

Производство участокĕсенче медицина аптечкисем, харпăр хăйне тата коллективлă майпа хӳтĕленмелли хатĕрсем пулмалла. Ку енĕпе тĕрĕслевсем тăтăшах ирттеретпĕр, тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшатпăр.

Ĕç сыхлавĕ енĕпе уйăхлăхсем ирттерессине йăлана кĕртнĕ. Кăçал вăл апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 30-мĕшĕччен иртрĕ. Унăн итогĕсене ĕç сыхлавĕн специалисчĕсен семинар-канашлăвĕнче пĕтĕмлетсе ирттернĕ.

Çулленех районти предприятисем хушшинче ĕç хăрушсăрлăхĕ енĕпе конкурс иртет. Çĕнтерӳçĕсем республикăри конкурса хутшăнаççĕ. Иртнĕ çул ку конкурса хутшăнса Мăн Сĕнтĕр райповĕн çăкăр комбиначĕ республикăра 3-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ.

Ответлă ĕçченсен пĕлĕвне ӳстерес, пĕлӳ шайне тĕрĕслес енĕпе ĕç сыхлавĕн республикăри центрĕ урлă кăçал 39 çыннăн пĕлĕвне ӳстернĕ.

Ĕç сыхлавĕн кабинечĕсене 10 организацире çĕнĕрен йĕркеленĕ, 22 организацире хăрушсăрлăх кĕтесĕсене уçнă. Вырăнсенче ĕç хăрушсăрлăхĕ енĕпе хаçат-журнал çырăнса тăраççĕ, ĕç сыхлавĕн докуменчĕсем, типлă инструкцисемпе положенисем пур.

Производствăра суранланассин шайне тишкерни çавна кăтартса парать. Аманасси-суранланасси хальлĕхе ӳссе пырать. Енчен те иртнĕ çул июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне производствăра суранланнă çăмăл тĕслĕхсем 2 пулнă пулсан, кăçал вара çăмăл тĕслĕхсем 5 тата йывăрри 1. Кун пек тĕслĕхсем «Свобода», «Оринино», «Дружба» хуçалăхсенче, Муркашри кирпĕч заводĕнче, районти тĕп больницăра тĕл пулчĕç.

Мĕнре-ха сăлтавĕсем? Кусем вĕсем ĕçлекенсем тимсĕр пулни, ĕç хăрушсăрлăхĕн чи ансат правилисене те пăхăнманни, çӳлте ĕçленĕ чухнехи правилăсене вĕрентменни, хăрушлăхпа çыхăннă ĕçсене тытăниччен инструктаж ирттерменни, ĕçре ӳсĕр пулни, должноçри çынсем енчен тивĕçлĕ тĕрĕслев пулманни.

Халĕ вара производствăра суранланассипе аманассине чакарассипе туса ирттермелли ĕçсене асăнса хăварнă пулăттăм. Чи малтанах ĕç хăрушсăрлăхĕпе ĕç сыхлавĕ, пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе ĕç подразделенийĕсенче приказпа çирĕплетнĕ çынсем пулмалла. Ĕç сыхлавĕн инженерĕсен ответлисемпе пĕрле хăрушлăхсăр ĕç мелĕсене хăнăхтармалла, пĕлӳ шайне хакласа удостоверенисем парассине йĕркелемелле, тĕллевлĕ инструктажсем ирттермелле тата журналсем çине çырса хумалла. Обязательнăй майпа çынсем медицина тĕрĕслевĕ тăрассине йĕркелемелле. Ĕçлекенсен ятарлă ĕç тумтирĕ, атă-пушмак, харпăр хăйĕн сыхлав хатĕрĕсем пулмалла. Пушар сӳнтермелли хатĕрсем, пĕрремĕш медицина пулăшăвĕн аптечкисем те вырăнта пулччăр.

Çавна та каласа хăвармалла. Çу кунĕсенче çул çитмен чылай çамрăк тĕрлĕрен ял хуçалăх ĕçĕсене хутшăнать. Çав шутра вырма ĕçĕсене те. Кунта уйрăмах тимлĕ пулни кирлĕ. Çамрăксене ĕçе явăçтариччен медицина тĕрĕслевне тăратмалла, вĕсемпе инструктаж ирттермелле, ашшĕ-амăшĕн алă пусса çирĕплетнĕ ирĕкĕ кирлĕ тата вĕсемпе ĕçлеме килĕшӳ тумалла.

Юлашкинчен пурне те ырлăх-сывлăх, ĕçре çитĕнӳсем тата лайăх кăмăл-туйăм суннă пулăттăм.

**А. КУЗЬМИН,**
**Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Саккунлăхпа право тĕлĕшĕнчи йĕркелĕхшĕн

# 2007 - 2010 çулсенчи суд реформине пурнăçласа

РФ Конституцийĕн 10-мĕш статйинче палăртнă тăрăх, çĕршывра патшалăх влаçĕ саккунсем йышăнакан, ĕç тăвакан тата суд влаçĕ çине пайланать. 2000 çултан тытăнса Раççейре суд влаçне реформăлас ĕç пуçланчĕ.

Пĕтĕмĕшле суд реформине икĕ тапхăрпа туса ирттерме палăртнă. Пĕрремĕш тапхăр вăл – 2000 – 2007 çулсем. Çак тапхăрта судсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме, судьясемпе судсен аппарачĕсене ӳстерме, çĕршывра пахалăхлă правосудие аталантарма условисем туса хума пăхнă.

Иккĕмĕш тапхăр вара 2007 – 2010 çулсене çыхăнтарса тăрать. Çак çулсенче суд системи интенсивлă аталанмалла. Çапла вара пĕтĕмĕшле юрисдикцин автоматизациленĕ ĕç вырăнĕсен шучĕ судсенче 75 пине çитет, арбитраж сучĕсенче – 14 пине. Документсемпе электронлă майпа усă курни судьясен тата суд аппаратурин ĕçченĕсен ĕç эффективлăхне ӳстерĕ.

Пĕтĕмĕшле суд юрисдикцийĕн 2200 веб-сайдне тата арбитраж сучĕсен 13 веб-сайдне хатĕрлеме пăхнă. Çакă вăл суд ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сведенисене Интернетра вырнаçтарма май парать (судсен ĕçĕ-хĕлĕн йĕрки, суд акчĕсен сведенийĕсем, суд статистики, уйрăм ĕçсен категорийĕсем енĕпе суд пĕтĕмлетĕвĕсем, суд сообществин органĕсем пирки сведенисем (судьясен канашĕсем тата квалификациллĕ коллегисем), вĕсен йышĕпе ĕç режимĕ, судья кандидачĕсемпе вĕсене пăхса тухмалли йĕрке.

Ытларах хирĕç тăрусене судчçен татса парасси çине пысăкрах тимлĕх уйăраççĕ. Çакă судсем çине тиенекен йывăрăша сирме, суд акчĕсен пахалăхне ӳстерме май парĕ.

Тепĕр палăрăмлă саманта та аса илтермесĕр май çук. Суд ларăвĕ пуçланиччен судья çак ĕç пирки пур йышши пĕлтерӳсемпе заявленисене те пĕлтерме тивĕç. Çакă судри коррупцие пĕтермелли мелсенчен пĕри пулса тăрать. Кунта çавăн пекех ĕçсене пăхса тăхнă чухне мăшăрĕсем, тăванĕсем, судья хăти-тăхлачисем адвокат пулма пултарайманни те пысăк пĕлтерĕшлĕ самантсенчен пĕри пулса тăрать.

Малашне кашни суд ларăвĕн аудиоçыравне ирттерĕç. Çакă процессуаллă нормăсене пăхăнма, суд ларăвĕсен протоколĕсем пирки тĕрлĕрен çăхавсенчен хăтăлма май парать.

Пĕтĕмĕшле юрисдикцин пур район сучĕсенче те граждансене йышăнмалли пӳлĕмсене йĕркелеççĕ. Апла пулсан тĕрлĕ ыйтусене татса парассипе судсенче черет тăрасси пĕтет.

Судьясем малашне хăйсен тупăшĕ, пурлăхĕ тата пурлăх обязательствисем пирки обязательнăй йĕкепе декларацисем тăратма тивĕç. Çакă та вĕсен ответлăхне ӳстерме пулăшĕ.

Судсенче ĕçлекенсене хваттерсемпе тивĕçтерессипе те çĕнĕлĕхсем пур. РФ Конституцийĕн 124 статйипе килĕшӳллĕн пĕтĕмĕшле юрисдикцин тата РФ Аслă Сучĕн Суд департаменчĕн 1713 судйипе суд аппарачĕн 1020 ĕçченне, арбитраж сучĕсен 200 судйипе арбитраж сучĕсен аппарачĕсен 195 ĕçченне хваттерпе тивĕçтереççĕ.

Пĕтĕмĕшле юрисдикци сучĕсенче пĕр судья пуçне служба пӳлĕмĕ 117,8 тăвткал метртан 129,6 тăваткал метра çитмелле, арбитраж сучĕсенче 85,4 тăваткал метртан 111,5 тăваткал метра. Арбитраж сучĕсенче пĕр судья пуçне 160 тăваткал метр шутпа «судья офисĕсене» йĕркелĕç.

Суд çурчĕсене сыхлассине малашне пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Суд акчĕсене пурнăçлассин калăпăшĕ 52 процентран 80 процента çити ӳсмелле.

Муркаш район судне Э.Л. Тарасова ертсе пырать. 2006 çул итогĕсемпе вăл «Чăваш Республикинчи чи лайăх район сучĕн председателĕ» ята тивĕçрĕ. Ăнсăртран мар. Пирĕн патра правосуди пахалăхне тивĕçтерессине, суд системин ĕçченĕсем тĕлĕшпе требованисене ӳстернине, судсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки çутатассине малти вырăна хума тăрăшаççĕ. Ӳсĕмсем те çук мар.

Акă, кăçалхи пĕрремĕш çур çулта район судне 85 уголовнăй ĕç пынă. Вĕсенчен 81 ĕçне приговор йышăнса пăхса тухнă. 106 çынна айăпланă, вĕсенчен 18-шĕ – çул çитмен çамрăксем. Гражданла ĕççене 116 пăхса тухнă. Танлаштарас пулсан, иртнĕ çулхи çав вăхăтра 71 уголовнăй ĕçпе 128 гражданла ĕç пăхса тухнă.

Район судĕнче федераллă судьясен приемнăйĕсене йĕркеленĕ. Унта граждансем хăйсене интереслентерекен ыйтусемпе пыма пултараççĕ.

2005 – 2006 çулсенче район сучĕн çуртне тĕпрен юсанă. Уйрăм котельнăй туса лартнă, çурт умне, çивиттине юсанă. Çапла вара Муркаш район сучĕ Муркаш ял тăрăхĕ ирттерекен «Чи лайăх ял» конкурсра «Учрежденинин, организацин тата предприятин тавралăхĕнчи чи лайăх территори» номинацире çĕнтнрӳçĕ пулса тăчĕ.

Район сучĕн бази çинче кăçал Чăваш Республикинчи район судйисен кустри семинарĕ иртрĕ. Ытти регионсен ĕç опытне те алла илме тăрăшатпăр. Акă, 2007 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнче Муркаш район судĕнче ЧР Суд департаменчĕн управленийĕн ертӳçи В.П. Петров ертсе пыракан делегаци пулчĕ. Вĕсен шутĕнче Чăваш Республкинчи судьясен канашĕн председателĕ Г.Г. Трынова тата ыттисем те пулчĕç. Вĕсем Муркаш район сучĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç, хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç.

**В. ЗАХАРОВ,**
**район сучĕн судйин пулăшаканĕ.**

2007 çул – Ача çулталăкĕ

# Çуралнă кун – хаваслă кун

Пирĕн Шуркассинчи пуçламăш шкулта пĕлӳ пухакан ачасем хăйсен "иккĕмĕш килĕнче" яланах вăхăта кăмăллă, усăллă тата савăнăçлă ирттерме тăрăшаççĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен унта Р.И. Иванова вĕрентекен ертсе пынипе час-часах савăнăçлă уявсем, тĕрлĕ вĕренӳ ĕçĕсем туса ирттереççĕ.

Акă çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче те пирĕн шкулта чи савăнăçлă уявсенчен пĕри "Ман çуралнă кун" ятпа иртрĕ. Унта пире хаваслă уяв туса парас тесе пирĕн атте-аннесем йышлăн пухăнчĕç. Вĕсем пире тĕрлĕ сĕнӳсем пачĕç, кашнин ӳсĕмĕсемпе интересленчĕç, тутлă апатçимĕç хатĕрлеме пулăшрĕç. Класс пӳлĕмне те эпир вĕсемпе пĕрлех илемлетрĕмĕр, доска çине те илемлĕ саспаллисемпе çыртăмăр, юмахри геройсене çыпăçтартăмăр.

Уява "Почему и отчего" юрăпа пуçларăмăр. Ку юрă паянхи уява мĕншĕн пуçтарăнни çинчен. Унтан вара хăнасем умне менельник ачасем тухрĕç, хăйсемпе паллаштарчĕç. Вĕсем пурĕ улттăн пулчĕç: Ксюшăпа Карина Андрияновасем, Игорьпе Никита Ивановсем, Вика Егорова тата Таня Шурнова. "Каравай" юрăна юрланă хыççăн çак ачасен ашшĕ-амăшĕсем пулăшнипе хатĕрленĕ парнесене пачĕç. Парнисем вара ачасене питĕ килĕшрĕç.

Ун хыççăн ачасем хăйсен вăйĕпе илемлетнĕ, тĕрлĕрен тутлă çимĕçсемпе пуянлатнă, юмахри сăнарсен ячĕсене çырнă уяв сĕтелĕсем хушшине вырнаçрĕç. Сĕтелсен ячĕсем вара "Золушка", "Принцесса", "Дюймовочка", "Аленушка".

Шкулта чылай çул ĕçлесе тутлă апат пĕçерме вĕренсе çитнĕ И.И. Троицкая техĕмлĕ те сиплĕ чейпе, ăста аласемпе хатĕрленĕ çимĕçсемпе хăналанă хыççăн конкурссемпе вăйăсем, ташă-юрă пуçланчĕ. Конкурссен шутĕнче уйрăмах пире "Парне", "Çичĕ тĕслĕ чечек" сĕтелсен ячĕсемпе çыхăннă хӳтĕлев конкурсĕсем питĕ кăмăла кайрĕç.

"Парне" конкурса хутшăнакансем пурте хастар пулчĕç. "Çичĕ тĕслĕ чечек" конкурсра вара 1-мĕш класра пĕлӳ пухакан Ваня Иванов çу кунĕсем çинчен илемлĕ юрăна питĕ пултаруллă шărантарчĕ.

Кайран "Вырăнсемпе улшăн" вăйă иртрĕ. Унта та ачасем пысăк хăваспах хутшăнчĕç. Ун хыççăн татах вăйă-кулă, ташă-юрă...

Уява пирĕн вĕрентекен Р.И. Иванова çырнă шкул пурнăçĕпе çыхăннă шӳтлĕ такмаксемпе вĕçлерĕмĕр.

Уяв икĕ урока яхăн тăсăлчĕ пулин те, эпир ывăннине те туймарăмăр, хамăрăн юратнă атте-аннесемпе килелле шăкăл-шăкăл калаçса-кулса утрăмăр.

Эпир кăçал 4-мĕш класран вĕренсе тухрăмăр. Пирĕн хамăрăн тăван шкулпа, пĕрремĕш вĕрентекенсемпе уйрăлмалли вăхăт. Çакăн пек хаваслă уявсене ирттерме пулăшнăшăн эпир хамăрăн атте-аннесене тата юратнă вĕрентекене Р.И. Иванована чĕререн тав тăватпăр, ăна ачасене пĕлӳ парас ĕçре нумай çул чăтăмлăх çитерме çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**К. АНДРИЯНОВ,**
**И. ИВАНОВА,**
**Шуркассинчи пуçламăш шкулта 4-мĕш класра вĕренекенсем.**

Творчество ĕçĕсен конкурсĕ

# «Хавхалану çунат хушать»

Кашни ачан пурнăçĕ хăйне евĕр. Анчах та уйрăм лару-тăрури ачасем те çук мар. Чăваш Республикин Президенчĕ хăйĕн указĕпе палăртнă Ача çулталăкĕнче 2007 – 2010 çулсенчи «Чăваш Ен ачисем» тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн Чăваш Республикинчи ачасемпе çамрăксен библиотеки инвалид ачасем хушшинче «Хавхалану çунат хушать» конкурс ирттерет. Унта 7 – 10 çулсенчи ачасем, вĕрентӳ организацийĕсен ятарлă учрежденийĕсем, социаллă хӳтлĕх органĕсем, сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсем çумĕнче, инвалидсен обществăлла организацийĕсенче ĕçлекен коллективсем (кружоксем, студисем, ушкăнсем т. ыт. те)хутшăнма пултараççĕ. Конкурс июнĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса декабрĕн 1-мĕшĕччен иртет. Унăн итогĕсене çак номинацисенче палăртаççĕ:

– «Великая, волшебная, таинственная страна – Детство» е «Я в мире детства» (ачалăх пирки А 4 формат листи çинче сăвă çырса кăтартса илемлетмелле);

– «Книга и Я» (вырăс тата чикĕ леш енчи писательсен произведенийĕсем тăрăх А 4 формат листи çине ӳкерчĕксем тумалла);

– «Мир за моим окном» (Интернетра харпăр хăйĕн веб-сайтне чи лайăх йĕркелессипе).

Требованисем çапла. Кашни ĕçе А 4 формат листи çине йĕркеллĕ вырнаçтармалла, СД е DVD диск çине çырмалла. Кунпа пĕрлех ĕçе кам пурнăçланин хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, хăш уйăхра тата хăш çул çуралнине, ăçта пурăннине тата вĕреннине кăтартни, телефон, электронлă адрес кирлĕ.

**Ĕçсене çак адреспа йышăнаççĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Хĕрлĕ площадь, 5-мĕш çурт, ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека.**